Çулталăк ĕçĕсене пĕтĕмлетрĕç

# Тĕллевлĕ вăй хурсан ăнăçу пулатех

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Иртнĕ çул выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç отраслĕн пĕтĕмĕшле аталанăвĕнче малалла туртăнаслăх утăмсем сахал мар пулчĕç. Çакна çирĕплетекен тĕслĕхсем: 2009 çулта усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне хуçалăхсем 47 центнер аш-какай, 291 центнер сĕт туса илнĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсем тĕрлĕ çăлкуçсем урлă пурĕ 1490 тонна (пĕлтĕрхинчен 30 процент сахалрах) аш-какай реализациленĕ, 9211 тонна сĕт, 57 миллион та 4 пин çăмарта туса илме пултарнă. Чăх-чĕп фабрики çăмарта туса илессине пĕлтĕр 15 процент ÿстернĕ те кашни чăхран вăтамран 331 штук çăмарта илсе производствăна Европа шайне кăларма пултарчĕ.

Республика шайĕпе пăхсан та Муркаш районĕ пĕтĕмĕшле малти вырăнсенче пырать. Çултан-çул Суворов яч. хис., «Герой», «Свобода», «Ударник», «Восток», «Оринино» хуçалăхсем аш-какай туса илессипе ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ: усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне вĕсем 64-198 центнер аш туса илнĕ. Çак ÿсĕмсем асăннă хуçалăхсенче выльăхсен шутне чакарнипе мар, зооветеринари требованийĕсене пăхăнса çуллахи вăхăтра çителĕклĕ паха апат хатĕрленипе, выльăхсене интенсивлă майпа пăхнипе пулса пыракан ĕç. Пĕлтĕр «Герой» хуçалăх аш-какай туса илессипе ыттисенчен лайăхрах ĕçлесе пычĕ: усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне 198 центнер аш-какай туса илчĕ. Халăхран çулталăк хушшинче 21 пуç мăйракаллă шултра выльăх туянчĕ. Кун пек тĕслĕхсем районта татах та пур. «Ударник», «Восток», Суворов яч. хис. хуçалăхсем 104 пуç мăйракаллă çамрăк шултра выльăх туянчĕç. Районта аш-какая сутнă мăйракаллă шултра выльăхăн чĕрĕ виçи вăтамран 353 килогрампа танлашрĕ. Шел пулин те, «Лидер», «Передовик», «Рассвет», Чапаев яч. хис., Ленин яч. хис., Андреев яч. хис. хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăхсен сутнă чĕрĕ виçи 150-313 килограмм кăна пулнă.

Продукци туса илессин хăйхаклăхĕ те продукцие сутнă хакпа тӳрремĕнех çыхăннă. Иртнĕ çул, тĕслĕхрен, Суворов яч. хис. хуçалăхра мăйракаллă шултра выльăхăн пĕр центнер чĕрĕ виçине туса илме 7040 тенкĕ тăкакланă пулсан, кашни центнерне 7822 тенкĕпе сутнă. Çапла вара Анаткассисем мăйракаллă шултра выльăхран пĕтĕмпе 600 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Сыснасен чĕрĕ виçине туса илме кунта 7310 тенкĕ тăкакланă та 8145 тенкĕпе сутнă. Ку çулпа пырса сыснасем ерчетес отрасльтен 779 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Çав хушăрах «Оринино» хуçалăх пĕр центнер мăйракаллă шултра выльăхăн чĕрĕ виçине туса илме 6794 тенкĕ тăкакланă та 6455 тенкĕпе сутнă.

Çитĕнекен ĕне выльăх 2009 çулта талăксерен вăтамран 559 грамм, сыснасем 338 грамм ӳт хушса пынă. Мăйракаллă шултра выльăхсен ӳт хушаслăхĕ Чкалов яч. хис. хуçалăхра 695 грамм, «Свобода» хуçалăхра 638 грамм, «Ударникра» 667 грамм, Суворов яч. хис. хуçалăхра 646 грамм пулса пынă. Самăртма хупнă вăкăрсем «Герой», «Оринино» хуçалăхсенче талăксерен вăтамран 994-929 грамм ӳт хушнă. Çамрăк ĕне выльăх ӳстернĕ çĕрте 9 хуçалăх «Моргаушкорм» предприяти туса кăларакан ЭКДпа усă курнă.

Районĕпе иртнĕ çул пĕтĕмпе 2210 пăру илнĕ. Çав шутра ĕнесенчен – 1842 пуç. Çакă вăл 100 ĕне пуçне 78 пăру илнипе танлашать. Ку ĕçре «Герой», Суворов яч. хис., Андреев яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăх специалисчĕсене ырăпа асăнса хăварас килет. Выльăх-чĕрлĕх патĕнчи чи йывăр та кăткăс ĕç вăл – çамрăк пăрусене таса сывă пăхса çитĕнтересси. 2009 çул кăтартăвĕсемпе «Ударник» хуçалăхри Валентина Александровна Федотова пăру пăхакана çитекенни пулмарĕ. «Оринино», Суворов яч. хис. хуçалăхсенчи çамрăк выльăхсем патĕнче вăй хуракансем те ырă сăмаха тивĕç. «Оринино» хуçалăхăн Патаккассинчи сĕт фермин коллективĕ пăрусем ӳстернĕ çĕрте кăçал çĕнĕ технологи пурнăçа кĕртрĕ: кунта пăрусене сĕтпе мар, кĕвĕлентернĕ сĕтпе тăрантараççĕ. Ку опыта вĕсем Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Коминтерн яч. хис. хуçалăхран вĕренсе килчĕç.

Сĕт – хуçалăхсене кашни кун укçа паракан çăлкуç. Пĕлтĕр кашни ĕнерен районĕпе вăтамран 4176 кг сĕт сурăмăр. Шел пулин те, пĕлтĕр эпир сĕт туса илессипе çителĕклĕ ĕçлеймерĕмĕр. Иртнĕ çул сĕт туса илессине виçĕм çулхинчен 8 процент чакартăмăр. Çапла вара 797 тонна сĕт туса илеймерĕмĕр. Çак çухатăва укçа çине куçарсан, сĕт хакне вăтамран 8 тенкĕ те 40 пуспа шутласан та, хуçалăхсем 6 миллион та 700 пин тенкĕ çухатнипе танлашать. Хуçалăхсем хушшинче сĕт сăвассипе Суворов яч. хис. хуçалăха палăртма кăмăллă. Иртнĕ çул вĕсем кашни ĕнерен вăтамран 5163 кг сĕт суса экономика ăмăртăвĕнче мала тухма пултарчĕç. Çак хуçалăхри Надежда Николаевна Орловапа Надежда Валентиновна Михайлова маттур операторсем хăйсене шанса панă ушкăнри кашни ĕнерен вăтамран 6485-шер килограмм сĕт сума пултарчĕç. «Ударник» хуçалăхри Зоя Степановна Андреевăн та кăтартăвĕ начар мар: кашни ĕнерен 6011-шер килограмм. Районĕпе вăтам сăвăма 5 пинрен иртнĕ дояркăсем 19. Сăмах май, пĕлтĕр вĕсем 11-ĕн пулнăччĕ. Хастаррисен шутне «Свобода» хуçалăхăн Кашмашри сĕт фермин ĕçченĕсене те кĕртмелле. Пĕлтĕр вĕсем кашни ĕнерен вăтамран 5066 килограмм сĕт сума пултарчĕç.

Районта чылай хуçалăхсенче сысна ĕрчетесси, унран продукци илесси йывăртарах пулса пычĕ. 2007 çулта туса илнĕ пĕтĕм аш-какайран сысна какайĕн тӳпи 47 процент пулнă пулсан, 2009 çулта - 34 процент. Пĕрремĕш сăлтавĕ – чылай хуçалăхра сысна ĕрчетес ĕç отраслĕ тупăш параймanran сыснасен кĕтĕвĕсене пĕчĕклетни. Паянхи рынок условийĕсенче пирĕн çĕнĕлле шутлама вĕренес пулать. Ахальлĕн сыснасене 100 килограма çити самăртса çитерме хăш-пĕр фермăсенче 300 кун е ытларах та вăхăт иртterни йĕркеллĕ пулăм мар.

2009 çулта хуçалăхсем пурĕ 14479 сысна çури илнĕ. Халăха 7122 çура сутнă. Кашни 100 тĕп ама пуçне районĕпе вăтамран 1177 çура илнĕ. Çав хушăрах «Герой» хуçалăхра – 1851, «Свободăра» – 1713, «Востокра» – 1700, Суворов яч. хис. хуçалăхра 1645 çура илнĕ.

Сурăх усракан хуçалăхсем районĕпе те «Герой» хуçалăх кăна. Иртнĕ çул кунта кашни сурăхран 4,2 кг çăм каснă, пĕтĕмпе 133 путек илнĕ, 100 ама пуçне 97 путек тивнĕ.

Кăçал хуçалăхсем выльăх-чĕрлĕх шутне устерессе шанас килет. Çакна валли выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарма паха апат çителĕклĕ хатĕрленĕ. Хĕл каçма 1 условнăй выльăх пуçне 21,5 центнер апат единици тивет.

Хĕл тапхăрĕн 4 уйăхĕнче хуçалăхсем 452,7 тонна аш-какай (иртнĕ çулхин 70 проценчĕ), 2722 тонна сĕт (102 процент) туса илнĕ. Кашни ĕнерен 1270 килограмм сĕт сунă (пĕлтĕрхинчен 146 килограмм ытларах). Сĕт сăвассипе Суворов яч. хис., «Оринино», «Свобода», «Восток» хуçалăхсем аван ĕçлесе пыраççĕ.

**А. БЕЛОВ.**



1955 çулта çуралнă Любовь Федоровна Морозова общественлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче 1980 çултанпа. Ялта çуралса ӳснĕ, унччен пĕр хушă хулара ĕçленĕ хĕре ял хуçалăхĕ хăй аллинчен вĕçертмен. Паянхи «Оринино» хуçалăхăн Орининти сысна фермине пĕрре пырса кĕнĕ хĕр йывăрлăхсем умĕнче алă усман. Фермăрах хăйĕн профессилле ăсталăхне ӳстерсе пынă. Юрататъ вăл хăй суйласа илнĕ ĕçе. Çавăнпах ĕнтĕ ирхи 6 сехетре тухса утать те килĕнчен, 7 сехетчен ĕç вырăнне çитет. Сарайĕнчи 300 пуçа яхăн сыснашăн унран çывăхрах çын çук та пулĕ. Кашни кунах 6-шар сехет ирттерет Любовь Федоровна сыснасем патĕнче. Çак хушăра хастар та ĕçрен хăраман хĕрарăм хăй пăхакан самăртма хупнă сыснасем, амасемпе аçасем çывăхне кашнин патнех сахалтан та 5-6 хут çитет. «Ахальлĕн вăтамран 7-8 пин тенкĕ ĕç укçи памаççĕ. Çакна ăнланнипе ĕçе çитсен малтанах сыснасен валашкисене пăхса тухатăп, таса марлăха кăларатăп, комбикорм тата шыв ярса паратăп, 8 клеткăран тислĕк хырса кăларатăп, хыççăн йывăç кĕрпи сарса паратăп», – терĕ ĕçрен ӳркенмен Любовь Федоровна Морозова.



«Ударник» хуçалăхăн Вăрманкассинчи сĕт фермине ертсе пыракан Лидия Ивановна Васильева (сулахайра) тата Зоя Геннадьевна Иванова, Валентина Филипповна Алексеева дояркăсемпе Юлия Михайловна Тимофеева зоотехник-селекционер, Валерий Михайлович Димитриев дояр коллектив пĕр чăмăрта пулсан çеç ӳсĕмсем тума май пурри пирки уççăнах пĕлтерчĕç. Пĕлтĕр фермăра кашни ĕне пуçне вăтамран 5101 килограмм сĕт сунă.



«Выльăх-чĕрлĕх пăхасси хĕрарăм ĕçĕ çеç тесе кам каланă?» – ыйтуллăн тинкерчĕ куçăмран «Герой» хуçалăхăн Шурчари ĕне выльăхферминче мăйракаллă шултра выльăх самăртассипе пĕрремĕш çул мар ĕçлекен Владислав Николаевич Иванов. Унăн та ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайĕ общественлла выльăх-чĕрлĕх пăхассипе çыхăннă. Çакăншăн Владислав пĕртте кулянмасть. Вăл иртнĕ çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе «2009 çулта мăйракаллă шултра выльăх самăртакан чи лайăх оператор» ята тивĕçрĕ. Вăл пăхакан мăйракаллă шултра выльăхсем талăксерен вăтамран 994 грамм ӳт хушнă, хуçалăха 7,6 тонна аш туса панă.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Йышăну

## Çурхи ейĕве хатĕрленсе

Хĕл сивви хавшама васкамасть пулин те, кун тăршшĕ вăрăмланни вăхăт çур еннелле кайни пирки калать. Çакна шута илсе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов февралĕн 11-мĕшĕнче «2010 çулхи çурхи ейĕве ирттерсе ярассине йĕркелесси çинчен» йышăну айне алă пуснă. Ăна пурнăçлама ятарлă комисси çирĕплетнĕ. Комисси председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г.Никитин. Йышăнура ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, предприяти-организацисен ертӳçисене çак тапхăрти чрезвычайлă лару-тăруран, пушар тухаслăхран çирĕп асăрханма тĕллевлĕ пулма, çакна валли ĕçсен планĕсене тума тата вĕсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăрассине йĕркелеме хушнă.

Асăннă йышăну район пурнăçĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсе халăха ăнлантарас ĕçе общественноçа, шкул коллективĕсене, массăллă информаци хатĕрĕсене активлă явăçтарма ыйтнă.

«2010 çулхи çурхи ейĕве ирттерсе ярассине йĕркелесси çинчен» йышăну епле пурнăçланнишĕн район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Милютин яваплă пулса тăрать.

**А. ПЕТРОВ.**

Профилактика операцийĕ

## Юр çийĕн çӳреме

Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев февралĕн 10-мĕшĕнче юр çийĕн çӳрекен техникăна тĕрĕслеме, вĕсене регистраци тунине пăхса вĕсемпе усă курма ирĕк илнине пĕлме республикăра февралĕн 15-мĕшĕнчен мартăн 8-мĕшĕччен «Снегоход» профилактика операцийĕ ирттерме приказ кăларнă. Районти патшалăх техника надзорĕн инспекцийĕ çак вăхăтра тăтăш рейдсем ирттерме палăртать. Çавна май ĕç коллективĕсенче пулса асăннă операцин тĕллевĕсемпе паллаштарăпăр, вĕсен хуçисем техникăна вăхăтра регистрациленине, вĕсемпе хăрушсăрлăх правилисен требованийĕсене пăхăнса усă курнине тĕрĕслĕпĕр.

Иртнĕ çул республикăра çак операци вăхăтĕнче тĕрĕсленĕ техникăн пĕр пайĕ çирĕплетнĕ йĕркепе регистрацилеменни, тепĕр пайĕ техосмотр тăманни, водительсем кирлĕ категориллĕ удостоверенисемсĕр пулни, техника регистрациленĕ документсемсĕр эксплуатациленни тата патшалăх регистраци номерĕсемсĕр çӳрени палăрнă. Кашнийĕнех административлă майпа явап тытма тивнĕ. Кăçал çак çитменлĕхсене пĕтересси операцин тĕп тĕллевĕ пулать те.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзор инспекцийĕн районти пуçлăхĕ.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

## Çăварни иртрĕ

Юн кун Шурчари тĕп шкулта вĕренекенсем уроксем пĕтессе чăтăмсăррăн кĕтрĕç, мĕншĕн тесен паян Çăварни уявне ирттерме палăртнă.

Акă, кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Ачасем çунашкасем туртса тăвайккине пуçтарăнчĕç. Вĕсене сăртра улăмран хатĕрленĕ «çăварни карчăкĕн» кĕлетки кĕтсе илчĕ.



Улттăмĕш класра вĕренекенсем пухăннисене Çăварни уявĕн йăли-йĕркипе паллаштарчĕç, «çерçи урине хуçрĕç», «шыв çулĕ уçрĕç». Ачасем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла тăвайккинчен çунашкасемпе ярăнни те уявăн чăнчăн савăнăçĕ пулчĕ. Уяв вĕçĕнче ачасем хаяр сивĕ хĕл иртнине пĕлтерсе улăмран ăсталанă кĕлеткене çунашкапа сăртран антарса ячĕç. Çăварние ăсатма пухăннисем пурте «çăварни карчăкĕ» хыççăн çунашкапа ярăна-ярăна анчĕç. Пĕрле пухăнса кăвайт чĕртрĕç. Çăварнин тутлă икерчине çинĕ хыççăн ачасем учительсемпе пĕрле кăвайт таврă карталанса тăрса хĕвеле май юрăсем юрласа çаврăнчĕç:

«Атьăр пурте урама,
Çăварние чыс тума,
Çунашкапа ярăнма.
Çăварни! Çăварни!
Çăвар тулли икерчи,
Епле тутлă-çке вĕсем,
Сарă çупа сĕрнисем».

Чылайччен илтĕнчĕ ачасен хаваслă сасси шкул хыçĕнчи тăвайккире. Кăмăл туличчен ярăннă хыççăн ачасем çунашкисене туртса килелле саланчĕç. Уяв пурне те килĕшрĕ.

**Шурча шкулĕнче 6 класра вĕренекенсем.**